25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
ФЕВРАЛЬ
2
ЫТЛАРИКУН
25(6262) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Пирĕн войскăсем Сталинградăн вăтаçĕрĕнчен хĕвеланăçнерехре çавăрса илнĕ нимĕçсен фашистла войскисен группине пĕтерсе тăкас ĕçе вĕçленĕ

Дон фронтĕнчи войскăсем январĕн 27-мĕшĕпе 31-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче СТАЛИНГРАДАН вăтаçĕрĕнчи пайĕнчен хĕвеланăçнерехре çавăрса илнĕ нимĕçсен фашистла войскисен группине пĕтерсе тăкас ĕçе вĕçленĕ.

Çапăçусем пынă вăхăтра тата тытăнă илнĕ нимĕç генералĕсем каланă тăрăх çакна пĕлнĕ: 1942 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕ тĕлне Сталинград патĕнче, тылри, строительнăй тата полицейски чаçсене те шутласассăн, ĕлĕкрех пĕлтернĕ пек 220.000 çынна мар, тăшманăн сахалтан та 330.000 çынлă войскисене çавăрса илнĕ.

Çакă паллă: Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ нимĕç войскисем ноябрĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа январĕн 10-мĕшне çитиччен пирĕн артиллери пенипе, сывлăшран тăтăшах бомбăсем пăрахса тăнипе, пирĕн çĕр çинчи войскăсем атакăланипе, çавăн пекех тата выçлăха, шартлама сивĕсене тата чирсене пула 140.000 çынна çити çухатнă. Çапла вара, пирĕн войскăсем генеральнăй наступлени пуçласа янă вăхăта — 1943 çулхи январĕн 10-мĕшĕ тĕлне — Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ нимĕç войскисенче, вĕсене вăйлатма панă чаçсене, Тодт строительнăй организацине, полицейски чаçсене тата армипе корпус тылĕсене те шутласан, 190.000 çити салтакпа офицер пулнă.

Çак хисеп тĕрĕссине нимĕçсен 6-мĕш армин генерал-квартирмейстерĕн ĕçĕсене тăвакан полковник фон КУЛОВСКИЙ те, тыткăна илнĕскер, çирĕплетсе панă. Вăл çапла каланă: Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ нимĕç войскисен составĕнче январĕн 10-мĕшĕ тĕлне, тылсене те пĕрле шутласан, 195.000 çын пулнă, тенĕ. Çак хисепсене шута илсен, совет войскисем Сталинград патĕнче çĕнтерни тата пахарах çĕнтерӳ пулса тăрать.

Тыткăна илнисен хисепĕ январĕн 27-мĕшĕпе 31-мĕшĕ хушшинче 18.000 салтакпа офицер чухлĕ ӳснĕ, тăшманăн çавăрса илнĕ чаçĕсене хирĕç генеральнăй наступлени пуçласа янăранпа пирĕн войскăсем мĕнпурĕ 46.000 салтакпа офицера тыткăна илнĕ.

Паян пирĕн войскăсем нимĕç войскисен Сталинград патĕнчи группин, 6-мĕш армипе 4-мĕш танковăй армирен тăраканскерĕн, командующине генерал-фельдмаршала ПАУЛЮСА хăйĕн штабĕпе пĕрлех тата унăн штабĕн начальникне генерал-лейтенанта ШМИДТА тыткăна илнĕ. Паулюс фельдмаршал званине темиçе кун каялла кăна илнĕ.

Кунсăр пуçне, çак генералсене тыткăна илнĕ:

1) 14-мĕш танковăй корпусăн командирне ШЛЕММЕР генерал-лейтенанта,

2) 51-мĕш армейски корпусăн командирне ЗЕЙДЛИНЦ генерал-лейтенанта,

3) 4-мĕш армейски корпусăн командирне артиллерин генерел-лейтенантне ПФЕФФЕРА,

4) 100-мĕш çăмăл пехотнăй дивизии командирне САННЕ генерал-лейтенанта,

5) 29-мĕш мотодивизин командирне ЛЕЙЗЕР генерал-лейтенанта,

6) 295-мĕш пехотнăй дивизин командирне КОРФЕ генерал-лейтенанта,

7) 297-мĕш пехотнăй дивизин командирне МАРИЦ фон ДРЕББЕР генерал-майора,

8) 376-мĕш пехотнăй дивизин командирне фон ДАНИЭЛЬ генерал-лейтенанта,

9) 44-мĕш пехотнăй дивизин командирне ДЮБУА генерал-лейтенанта,

10) 4-мĕш армейски корпусăн начальникне ВОЛЬФ генерал-майора,

11) 51-мĕш армейски корпус артиллерийĕн начальникне УЛЬРИХ генерал-майора,

12) румынсен 20-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирне ДИМИТРИУ бригаднăй генерала,

13) румынсен 1-мĕш кавалери дивизийĕн командирне БРАТЕСКУ генерала,

14) 6-мĕш армин санитари службин начальникне ОТТО РИНОЛЬДИ генерал-лейтенанта.

Çапла ĕнтĕ, пĕтĕмпе 16 генерала тыткăна илнĕ.

Çавăн пекех тата çаксене тытса илнĕ: генерал-квартирмейстер ĕçĕсене туса тăракана фон КУЛОВСКИЙ полковника, 297-мĕш пехотнăй дивизири 524-мĕш пехотнăй полкăн командирне ВИЛЬГЕЛЬМ ЦИККЕЛЬ полковника, 297-мĕш артиллери полкĕн командирне ГЕНРИХ ФОХТ полковника, 44-мĕш пехотнăй дивизири 132-мĕш пехотнăй полкăн командирне ВЕГЕМАН полковника, 29-мĕш мотопехотнăй полкăн командирне БОЛЬЕ СИГУРТА, 4-мĕш армейски корпус штабĕн начальникне КРОММЕ полковника, 295-мĕш пехотнăй дивизи штабĕн начальникне ДИССЕЛЬ полковника, румынсен 20-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 91-мĕш полкăн командирне ПОПЕСКУ полковника тата ыттисене те нумайăшне тыткăна илнĕ.

Кунсăр пуçне тата çак штабсене тыткăна илнĕ: 14-мĕш танковăй корпусăн, 3-мĕш мотодивизин, нимĕçсен 297-мĕш тата 376-мĕш пехотнăй дивизийĕсен, румынсен 20-мĕш пехотнăй дивизийĕн, 44-мĕш, 83-мĕш, 132-мĕш, 297-мĕш, 523-мĕш, 534-мĕш, 536-мĕш пехотнăй полксен, 39-мĕшпе 40-мĕш артиллери полкĕсен, çыхăнăвăн 549-мĕш армейски полкĕн тата армейски сапернăй батальонăн штабне тыткăна илнĕ.

Тăшманăн çавăрса илнĕ чаçĕсене хирĕç генеральнăй наступлени пуçласа янăранпа, январĕн 10-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинче, совет войскисем, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 100.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

Çав вăхăт хушшинчех пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем — 744, танксем — 1.517, орудисем — 6.523, минометсем — 1.421, пулеметсем—7.489, винтовкăсем — 76.887, автомашинăсем — 60.454, мотоциклсем— 7.341, тягачсем, тракторсем тата транспортерсем—470, парашютсем — 5.700, радиостанцисем—304, бронепоездсем — 3, вагонсем — 575, паровозсем — 48, боеприпассемпе хĕçпăшалсен склачĕсем — 229 тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем Сватово хулине тытса илнĕ

Вăйлă атакăсем тунă хыççăн пирĕн войскăсем СВАТОВО хулипе пысăк чугунçул станцине тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Çамрăк патриотсем

ВАРМАР. Тăхăр çулхи Лидия Васильева фронт тенине кĕнекесемпе хаçатсем тăрăх çеç пĕлет. Анчах нимĕç, фашист тенисене илтсен, нимĕç оккупанчĕсен тискерле ĕçĕсем çинчен илтсен, унăн çамрăк чĕри тăшмана курайманлăхпа тулса ларать. Вăл Хоруйĕнчи туллимар вăтам шкулăн 3-мĕш класĕнче вĕренет. Вĕренӳре малта пынисĕр пуçне, Лидия фронта хăй перекетлесе усранă укçи-тенкипе пулăшать. Боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тунă çĕре вăл 70 тенкĕ пачĕ. Çавăн пекех 1-мĕш класра вĕренекен Василий Унтин — 28 тенкĕ, 2-мĕш класра вĕренекен Илья Николаев — 33 тенкĕ пачĕç. Хоруйĕнчи туллимар вăтам шкулăн коллективĕ боевой самолетсен эскадрильине тума пĕтĕмпе 2.000 тенкĕ пухрĕ. 4-мĕш класра вĕренекенсем (руководителĕ М. Герасимова юлташ) 400 тенкĕ пухнă. Самолетсен эскадрильине тума укçа пухас ĕç малалла пырать.

А. Иванов.

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ПАРТОРГАНИЗАЦИН VIII-мĕш КОНФЕРЕНЦИЙĔ

Январĕн 30—31-мĕшĕсенче Шупашкар хулинчи парторганизацин VIII-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ.

Конференцие ВКП(б) Обкомĕпе Хула Комитечĕн секретарĕ Чарыков юлташ уçрĕ.

Конференци президиумĕнче—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Белков, Ахазов, Никитин, Андреев, Крылов юлташсем, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ, ЦК ВКП(б) çумĕнчи Парти Контроль Комиссин Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Серов юлташ, Шалти ĕçсен Наркомĕ Белолипецкий, ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕсем Романова, Федоров, Енчиков юлташсем, хулари пысăк предприятисен директорĕсемпе парторганизацисен секретарĕсем, çар чаçĕсен представителĕсем.

Пĕтĕм зал тăвăллăн алă çупса конференцин хисеплĕ президиумне Партин Центральнăй Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюроне суйлаççĕ. „Аслă полководеца Сталин юлташа — урра!" тенĕ сасăсем илтĕнеççĕ.

Секретариатпа мандат комиссине суйланă хыççăн конференци çакăн пек кун йĕрки çирĕплетет:

1. ВКП(б) хула комитечĕн ĕçĕсем çинчен отчетлă доклад.

2. ВКП(б) хула комитечĕн ревизи комиссин отчечĕ.

3. ВКП(б) хула комитечĕн членĕсене тата кандидачĕсене суйласси.

4. ВКП(б) хула комитечĕн ревизи комиссине суйласси.

ВКП(б) хула комитечĕн VII-мĕшпе VIII-мĕш партконференцисем хушшинчи ĕçĕсем çинчен ВКП(б) Обкомĕн тата хула комитечĕн секретарĕ Чарыков юлташ доклад туса пачĕ.

ВКП(б) хула комитечĕн ĕçне,—тет докладчик,—икĕ тапхăра уйăрма пулать: пĕрремĕш тапхăр—хула комитетне суйланăран вара 1941 çулти июнĕн 22-мĕшне çити вăхăтри тапхăр тата иккĕмĕш—фашистла Германи Совет Союзĕ çине ултавлăн тапăннăран вара хальхи вăхăта çити пыракан тапхăр. Малтанхи тапхăрта Шупашкар хулинчи парторганизаци, пĕтĕм партипе пĕрле, партин XVII-мĕш с"езчĕпе Пĕтĕм Союзри XVIII-мĕш конференцийĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешсе пычĕ тата хуçалăхпа культура строительствинче, пирĕн çĕршывăн оборонăллă вăй-хăватне ӳстерес ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕ. Иккĕмĕш тапхăрта парти организацийĕ аслă Сталин кăларса тăратнă лозунгсем тăрăх ĕçлерĕ. „Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Флота пулăшма хамăрăн пĕтĕм вăя парар! Халăхăн пĕтĕм вăйне—тăшмана çĕмĕрсе тăкма!"текен лозунг парторганизацин тĕп лозунгĕ пулса тăчĕ.

Хулари парторганизаци унăн умне отечественнăй вăрçă лартнă пысăк задачăсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен Чарыков юлташ тĕплĕн каласа парать.

Продукци туса кăларас плана хулари промышленность предприятисем 102,2 процент тултарнă. Нумай предприятсем çулталăк планне срокчен тултарнă. Пĕтĕм союзри социализмлă ăмăртура чылай предприятисем малти вырăна тухнă, вĕсен ĕçне ВЦСПС-па наркоматсем паллă тунă. Куçарса килнĕ оборудованине вырнаçтарса ĕçе ярас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса иртернĕ.

Предприятисенче çĕнĕ кадрсем ӳсрĕç. Парторганизаци массăсемпе çыхăнса тăрасси çирĕпленчĕ, коммунистсен партире тăман массăсем хушшинчи влиянийĕ вăйланчĕ.

Хулари ĕççыннисем фронтра активлăн пулăшса тăраççĕ.

Çакăнпа пĕрлех Чарыков юлташ ВКП(б) хула комитечĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене те кăтартса пачĕ.

Конференци çавăн пекех ВКП(б) хула комитечĕн ревизи комиссин докладне итлерĕ. Ревизи комисси ĕçĕсем çинчен унăн председателĕ Прохоров юлташ доклад туса пачĕ.

Отчетлă докладсем тăрăх прение 23 çын тухса калаçрĕç. Делегатсем конкретнăй ыйтусем тăрăх каласа лайăх сĕнӳсем пачĕç, партин хула комитечĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критиклерĕç.

ВКП(б) Хула комитечĕ, — тет Полукаров юлташ,—пирĕн завод çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхнă. Хула комитечĕн работникĕсем пирĕн пата хула комитечĕн бюровĕ мĕнле те пулин ыйтăва сӳтсе-явас умĕн кăна пыраççĕ.

Пир-авăр фабрикин директорĕ Наумова юлташ хулари электростанци начар ĕçлени çинчен, вăл производствăллă плансене тултарма чăрмантарни çинчен калать. Декабрь уйăхĕнче,—тет Наумова юлташ,—пирĕн фабрика электроэнерги хăйне кирлинчен тăватă хут сахалтарах илчĕ, январь уйăхĕнче унтан та сахалтарах илнĕ. Хулари предприятисене электроэнерги парас ыйту парти горкомĕн ĕçĕнчи пысăк ыйтусенчен пĕри пулса тăрать, çавăнпа вăл ыйтăва халех татса памалла.

ЦК ВКП(б) çумĕнчи Партконтроль Комиссин уполномоченнăйĕ Серов юлташ хăйĕн сăмахĕнче ВКП(б) хула комитечĕн промышленноçа ертсе пырас ĕçри çитменлĕхĕсем çинче чарăнса тăрать. Партин хула комитечĕ фабрикăсемпе заводсен ĕçĕпе çителĕксĕр интересленнĕ, производствăна тĕплĕн пĕлме тăрăшман. 1942 çулти апрель уйăхĕнчен пуçласа çулталăк вĕçлениччен горком электростанци ĕçĕсем пирки темиçе решени те йышăннă, анчах вĕсенчен пĕрне те пурнăçа кĕртмен. Шупашкара куçарса килнĕ оборудованисем чылайĕшĕ халĕ те ĕçе кайман-ха. Пир-авăр фабрикинче кăна оборудованисенчен çуррине ытла ĕçе ямасăр вырттараççĕ. Кирпĕч завочĕ 1941 çулпа танлаштарсан продукци чылай сахалтарах туса кăларнă, çав вăхăтрах кирпĕч халĕ питех те кирлĕ. Горком вара завод ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕнле мерăсем те йышăнман.

Магнитская юлташ ФЗО шкулĕ çине ытларах çавăрăнса пăхма хушать. Пирĕн шкул,—тет вăл,—пысăк квалификациллĕ рабочисем вĕрентсе хатĕрлерĕ, анчах завод çурт çук пирки çав рабочисене йышăнасшăн мар. Пирĕн вĕренекенсен пурнăç условийĕсене лайăхлатмалла. Ĕç резервĕсен управленийĕ тата унăн начальникĕ Иванов юлташ пирĕн шкул çине çавăрăнса та пăхмасть. Парти горкомĕ те пирĕн шкулшăн сахал тăрăшать.

Партин хула комитечĕ çамрăк кадрсем хушшинче ĕçлесси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхман,—тесе паллă тăвать Никитин юлташ (НКВД). Хула комитечĕ çак ыйтупа пачах ĕçлемен тесе каласшăн мар эпĕ, анчах заводсемпе фабрикăсенче çак ĕçе лайăхлатма пулать тата лайăхлатмалла та. Çамрăк рабочисемшĕн хулари промкомбинатра уйрăмах начар тăрăшаççĕ. Çĕнĕрен илнĕ рабочисемпе работницăсем хушшинче политикăлла воспитани ĕçĕ çителĕксĕр пулса пырать.

Шупашкарти комсомолецсем отчетлă тапхăрта фронта пулăшас тĕлĕшпе сахал мар ĕç турĕç. Комсомол организацийĕсем производствăпа ытларах интересленме тытăнчĕç, хуçалăх ыйтăвĕсене татса пана çĕре активлăрах хутшăнма пуçларĕç. Анчах та комсомолăн хулари организацийĕн çитменлĕхсем те сахал мар. Çакăн çинчен ВЛКСМ Хула комитечĕн секретарĕ Охандерова юлташ каласа пачĕ. Комсомол речĕ пысăк предприятисенче вăраххăн ӳссе пырать. Комсомол организацийĕсен секретарĕсем союзра тăман çамрăксемпе начар ĕçлеççĕ. Комсомол пухăвĕсене иртерни çĕрте пирĕн пысăк çитменлĕхсем пур, комсомол хуçалăхне чылай çĕрте типтерсĕр тыткалаççĕ. Партин пуçламĕш организацийĕсем комсомол организацийĕсене куллен пулăшу парса пыни кирлĕ.

Н-ски заводăн партбюро секретарĕ Брикер юлташ заводри парторганизацин ĕçĕсем çинчен каласа парать. Кунти парторганизаци хăйĕн мĕнпур вăйне çĕнĕ çитĕнӳсем тăвас ĕçе хурать. Заводра ĕç тухăçлăхĕ ӳссех пырать, нормăсене тултарайман рабочисен йышĕ чакать. Анчах пирĕн ĕçре брак чылай процент йышăнса тăрать-ха,—тет Брикер юлташ.—Ĕç дисциплини тĕлĕшпе те çитменлĕхсем пур, политикăллă агитацие чăваш чĕлхипе туса пыни çук тата ыт. те. Парторганизацин нумаях пулмасть пулса иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕнче суйланă партбюрон çĕнĕ составĕн производствăри çак задачăсене çине тăрсах татса памалла кет.

Тухса калакансенчен нумайĕшĕсем хулари халăх хушшинче культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен ĕçлесси пачах та çителĕксĕр пулса пынине кăтартса пачĕç.

Хула комитечĕн ертсе пырас ĕçри çитменлĕхĕсенчен пĕри,—тесе палăртать ВКП(б) хула комитечĕн пропагандăпа агитаци отделăн заведующийĕ Ислюков юлташ,—хамăрăн решенисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине япăх тĕрĕслесе тăни пулса тăрать. Пропагандăпа агитаци ыйтăвĕсемпе иртнĕ çулта 40 решени йышăннă, анчах çав решенисем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслес ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Çитменлĕхсем çакăнтан килеççĕ те ĕнтĕ. Агитаципе тата пропагандăпа халăхăн пур сийĕсене те çавăрса илмен. Агитацие ĕçлĕ те витĕмлĕ тăвассишĕн большевикла кĕрешĕве сарса яман. Промышленноçри çĕнĕ кадрсене, уйрăмах национллĕ кадрсене, политикăллă воспитани парас ĕçе япăх йĕркеленĕ. Ертсе пырас ĕçри нумай работниксем хăйсен идейăллă теориллĕ пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлесе пымаççĕ. Парти активĕ агитациллĕ-пропагандăллă ĕçе çителĕксĕр хутшăнать. Хула комитечĕн çĕнĕ составĕ çак тĕлĕшпе большевикла ĕçлеме тивĕçлĕ.

Хула прокурорĕ Леонтьев юлташ хăшпĕр хозяйственниксемпе парторганизаци руководителĕсем социализмлă пурлăха сыхлас ĕç çине пачах та çителĕксĕр çавăрăнса пăхнине кăтартакан фактсене кăтартса парать.

Хула Совет исполкомĕн председателĕн заместителĕ Братчиков юлташ суту-илӳ организацисен ĕçне критикăлать. Столовăйсемпе магазинсенче çитменлĕхсем нумай. Маркосов (Чебторг) тата Герасин (Столовăйсен тресчĕ) юлташсем столовăйсемпе суту-илӳ предприятийĕсенчи тасамарлăхсемпе тата йĕркесерлĕхсемпе хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ, ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕнле мера та йышăнмаççĕ. Государство укçитенкипе пурлăхĕсене çаратнине хирĕç кĕрешмеççĕ. Халăхăн кулленхи нушисене тивĕçтерес тĕлĕшпе хула исполкомĕ хăй те нумай ĕç туман-ха.

Голубев юлташ (торф предприятийĕ) торф предприятине хула комитечĕн çĕнĕ составĕ енчен практикăллă пулăшу ытларах парса пыма ыйтать. Вăл Атăл урлă каçса çӳремелли çула лайăхрах туса йĕркелеме сĕнет. Çакă вăл пирĕн транспорта ытларах материалсем турттарма май парать, хула валли вутă турттарас ĕçе те çăмăллатать.

ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ хула комитечĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене критикăланине тĕрĕс тесе йышăнать. Промышленность предприятийĕсен ĕçне хула комитечĕ пур чухне те мар тимлĕн хутшăнса пынă, ыйтусене пур чухне те мар хăвăрт татса парса, вĕсене вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртсе пынă. Хăшпĕр руководительсенчен горком ыйтма тивĕçлине пур чухне те мар ыйтса çитернĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Андреева юлташ горисполком руководителĕсене вырăнти промышленноçа пачах та çителĕксĕр ертсе пынишĕн, ĕççынниcен жалобисем çине бюрократла пăхнишĕн çивĕччĕн критикăлать. Ĕç дисциплинине киревсĕр пăсни çинчен калакан чылай фактсене кăтартса парса, Андреева юлташ прогульщиксемпе кахалсене хирĕç татăклăн кĕрешес ыйтăва лартать.

Чарыков юлташăн юлашки сăмахĕ хыççăн конференци анлă решени йышăнчĕ, Решенире хулари парти организаци умĕнче тăракан конкретнăй задачăсене палăртса хăварчĕ. ВКП(б) хула комитечĕн ревизи комиссин отчетне конференци пĕр шухăш-кăмăллă пулса çирĕплетрĕ.

Унтан конференци мандат комиссийĕн отчетне итлерĕ. Мандат комиссин председателĕ Енчиков юлташ конференцие çапла пĕлтерчĕ: хулари ВКП(б) членĕсенчен—1.859 çынран тата ВКП(б) членĕн кандидачĕсенчен—872 çынран ĕç тăвакан сасăпа—281 делегат, канаштакан сасăпа—52 делегат пулнă. Ĕç тăвакан сасăллă делегатсен хисепĕнчен аслă шкулпа вăтам шкул вĕренсе пĕтернĕ çынсем—68,2 процент пулнă. Конференцие малтанхи хут делегата суйланнисен хисепĕ—32,2 процент, делегатсем хушшинчи хĕрарăмсен хисепĕ—20 процент, вырăссем—52,5 процент, чăвашсем—29 процент пулнă. Делегатсенчен 21 çын Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланисем пулнă.

Мандат комиссийĕн отчетне конференци çирĕплетрĕ.

Конференцие Шупашкар гарнизонĕн делегацийĕ саламларĕ.

Генийллĕ полководец, халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ патне çырнă çырăва хулари большевиксем пысăк хавхаланупа йышăнчĕç.

Конференци вăрттăн сасăласа ВКП(б) хула комитет членĕсен тата кандидачĕсен çĕнĕ составне, ВКП(б) хула комитечĕн ревизи комиссине суйласа хăварчĕ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн VIII-мĕш конференцире суйланă пленумĕн составĕ

1. А. П. Абрамян
2. З. А. Андреева
3. П. И. Аникин
4. М. К. Ардаматский
5. К. А. Арзамасова
6. Т. А. Ахазов
7. М. Н. Баркан
8. Н. И. Белков
9. Я. С. Бенский
10. А. А. Блошенко
11. Л. Н. Богатырева
12. М. Л. Брикер
13. А. С. Вишняков
14. Н. П. Енчиков
15. С. М. Ислюков
16. М. И. Каменецкий
17. И. П. Канатов
18. О. И. Ковалева
19. А. Б. Коган
20. К. А. Кукушкин
21. И. М. Ловягин
22. Н. Т. Лупанов
23. М. П. Макаров
24. С. С. Макаров
25. А. С. Малыхин
26. К. А. Малышева
27. А. М. Матвеев
28. Ф. Л. Мойсик
29. А. С. Охандерова
30. Д. Н. Полукаров
31. М. М. Романова
32. К. В. Рыбакова
33. Б. Л. Рутман
34. Н. Т. Тютиков
35. Е. К. Трусова
36. П. Т. Тимофеев
37. Д. Ф. Федоров
38. В. П. Шаронова
39. А. А. Щербаков
40. И. М. Чарыков
41. В. П. Чернов
42. И. Н. Чечеткин
43. Н. И. Чурбанов
44. А. М. Юдкевич
45. В. Я. Яковлев

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленум членĕсен кандидачĕсем

1. Н. Б. Амелехин
2. И. Г. Гаврилов
3. Ф. П. Генкина
4. И. Г. Зайченко
5. Е. Е. Кузнецова
6. В. И. Лебедева
7. Н. С. Наумова
8. А. М. Петрова
9. А. Н. Петрушова
0. А. Д. Плетнева
11. И. Т. Хохлов.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн VIII-мĕш конференцире суйланă ревизи комиссин членĕсем

1. Е. С. Гельфанд
2. Л. С. Граев
3. М. И. Кунаков
4. А. И. Ланском
5. Е. П. Прокопьева
6. М. П. Прохоров
7. А. И. Рычкова.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пĕрремĕш пленумĕ

Февралĕн 1-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пĕрремĕш организациллĕ пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум ВКП(б) Хула Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма **И. М. Чарыков** юлташа, иккĕмĕш секретарĕ пулма **М. М. Романова** юлташа, виççĕмĕш секретарĕ пулма **Д. Ф. Федоров** юлташа, кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма **Н. П. Енчиков** юлташа, промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма **Ф. Л. Мойсик** юлташа çирĕплетрĕ.

Пленум **И. М. Чарыков, М. М. Романова, Д. Ф. Федоров, Н. П. Енчиков, Ф. Л. Мойсик, П. И. Аникин, Д. Н. Полукаров** юлташсене ВКП(б) хула комитечĕн бюро членне суйларĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 31-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 31-мĕшĕнче Кавказ лешьенчи фронтăн войскисем Белореченская ятлă район центрĕпе чугунсул узелне тата Горячий Ключ, Рязанская ятлă район центрĕсене тытса илнĕ.

Çурçĕр Кавказ, Воронеж, Кăнтăр-Хĕвеланăç, Кăнтăр, Ленинград тата Волхов фрончĕсенчи войскăсем малтанхи енеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

Иртнĕ эрнере, январĕн 24-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата тăшманăн аэродромĕсенче нимĕçсен 141 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 93 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 30-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинăна ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 8 батарейне пусарса лартнă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, тăшманăн пехотине 2 батальона çити салатса янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон фрончĕнчи войскăсем гитлеровецсен пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă групписене пĕтерсе пынă. Сталинградăн вăтаçĕрĕнчи пайне сыхласа вырăнта пĕтерсе пынă чухне пĕр кун хушшинче нимĕçсен 5.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, тыткăна илнисем хушшинче темиçе нимĕç генералĕ пур. Пирĕннисем 90 оруди, 75 пулемет, 20 автомашина тата радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕнчи войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн контратакисене сирсе ярса, малалла тапăнса пынă. Пĕр участокра пирĕн подразделенисем нимĕçсен тылне кĕрсе кайса тăшманăн маршевăй батальонне атакăланă та ăна пĕтерсе тăкнă. Н-ски моторизованнăй чаçа нимĕçсен 15 танкĕ тата автоматчикĕсен десанчĕ атакăланă. Совет боецĕсем, противотанковăй пăшалсемпе персе, 3 танка вут тивертнĕ, пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, нумай нимĕç автоматчикне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕнчи войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă. Старобельскран хĕвеланăçнерехре совет чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе унăн оборони вăйлă тĕреклĕхне пункчĕсене тытса илнĕ. Нимĕçсен 10 танкне тата 300 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. 15 оруди, 32 пулемет тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла пурăнакан 20 пункта тата 2 чугунçул станцине тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем 13 танк, 7 оруди, ултă кĕпçелĕ 5 миномет, вездеход, 22 автомашина, 4 радиостанци тата 25 километр тăршшĕ ытла телефон кабельне тытса илнĕ. Пĕр чугунçул станцийĕн районĕнче пирĕн чаçсем нимĕçсен бронепоездне тытса илнĕ. Пирĕн войскăсем ĕнер йышăннă Черянка ятлă район центрĕнче тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Артиллери снарячĕсен 4 складне, 5 паровоза тата çар пурлăхĕ тиенĕ 100 вагона тытса илнĕ. Совет авиацийĕ сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 3 самолетне персе ӳкернĕ тата хăйсен аэродромĕсенче 15 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшмана çапăçса унăн 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Партизансем пулеметсем, автоматсем, винтовкăсем, револьверсем тата 10 пин патрон тытса илнĕ. Партизансен Щорс ячĕпе тăракан отрячĕ нимĕçсен 3 çар эшелонне ӳпентерсе янă. 2 паровоз, 29 вагон тата 34 платформа çĕмĕрлнĕ. Крушенисем вăхăтĕнче 160 гитлеровец пĕтнĕ.

* * *

АФИ агентстви французсен паллă журналисчĕн Пертинаксăн статьине пичетленĕ. Çав статьяра çапла калать: хальхи вăхăтра Германи вăйĕсене урăхла вырăнаçтарас ĕç анлăн пырать, тет. «Нью-Йорк таймс» хаçатăн вăрçă обозревателĕ каланă тăрăх, хĕвелтухăçĕнчи фронтран нимĕçсен 50 дивизине каялла илсе кайнă пулать.

Пертинакс тата «Нью-Йорк таймс» хаçатăн вăрçă обозревателĕ нимĕç дивизийĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтран каялла илсе кайни çинчен калани чăнлăхпа пĕрех те килĕшсе тăмасть. Юлашки вăхăтра Хĕрлĕ Çар наступлени тунипе тата Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕç войскисем поражени тӳснипе нимĕç командованийĕ чăнах та хăйĕн войскисене урăхла вырăнаçтарса пырать. Анчах та нимĕç дивизийĕсене хĕвелтухăçĕнчен хĕвеланăçнелле мар, хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнелле куçараççĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта ĕлĕкрех янă дивизисем çумне нимĕç командованийĕ 1942-мĕш çулхи ноябрь вĕçĕнчен пуçласа, урăхла каласан — совет войскисем наступлени пуçласа янăранпа, Хĕвелтухăçне васкаса тата темиçе дивизи янă, 1942-мĕш çулхи ноябрь вĕçĕнчен пуçласа нимĕç командованийĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта 19 пехотнăй, 3 танковăй дивизи янă, вĕсенчен 11 дивизие Францирен, Бельгирен тата Норвегирен, ыттисене Германирен илсе килнĕ. Нимĕçсен çав дивизийĕсен номерĕсем ак çаксем: 1-мĕш, 3-мĕш, 6-мĕш, 7-мĕш, 8-мĕш, 9-мĕш тата 10-мĕш авиаполевой, 6-мĕш, 7-мĕш, 27-мĕш танковăй, 69-мĕш, 161-мĕш, 302-мĕш, 304-мĕш, 306-мĕш, 320-мĕш, 321-мĕш, 337-мĕш, 401-мĕш, 404-мĕш, 406-мĕш тата 308-мĕш пехотнăй дивизисем. Кунсăр пуçне, тĕрĕс сведенисем тăрăх, хальхи вăхăтра хĕвеланăçĕнчен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта нимĕçсен тата 9 дивизийĕ пырать, çав шутра 3 танковăй дивизи пур. Çапла ĕнтĕ, гитлерла командовани Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтран пĕр дивизие те илсе кайман, йăлтах урăхла, вăл Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта çĕнĕрен 31 дивизи янă е халь ярать. Паллă сăлтавсене пула гитлеровецсем хăйсен войскисене хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнелле янине пур майпа та пытараççĕ. Анчах ĕç çапла пулни халĕ лайăх паларса тăрать. АФИ агентстви тата «Нью-Йорк таймс» хаçатăн обозревателĕ чăнлăхпа пĕрех те килĕшсе тăман заявлени туни тĕлĕнтерет.

Февралĕн 1-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Кăнтăр-Хĕвеланăç, Кăнтăр, Çурçĕр Кавказ, Воронеж, Ленинград** тата **Волхов** фрончĕсенчи войскăсем малтанхи енеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон фрончĕнчи войскăсем Сталинградăн вăтаçĕрĕнчи пайĕнчен хĕвеланăçнерехре çавăрса илнĕ нимĕçсен фашистла войскисен группине пĕтерсе тăкас ĕçе вĕçленĕ. Сталинградран çурçĕртерехре пирĕн чаçсем хирĕç тăракан гитлеровецсене пĕтерсе пынă. Нимĕçсен 900 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнĕ тата йышлă трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕнчи войскăсем, тăшманăн контратакисене сирсе ярса, малалла куçнă. Н-ски соединени нимĕçсем тĕреклетнĕ халăх пурăнакан виçĕ пункта йышăнса илнĕ. Пĕр танкетка, 3 оруди, ултă кĕпçеллĕ миномет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем тăшманăн икĕ контратакине сирсе янă. Нимĕç автоматчикĕсен икĕ взводне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 4 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕнчи войскăсем ăнăçлăн наступлени тунă, вĕсем нимĕçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран хĕссе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли ытла выртса юлнă. 3 оруди, 7 противотанковăй пăшал, 2 миномет, 18 пулемет, боеприпассен складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Пирĕн танкистсем тăшманăн тылне кĕрсе кайса, нимĕçсен фронт патнелле пыракан маршевăй батальонне аркатса тăкнă.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă, вĕсен пĕр пайĕ нимĕçсемпе венгерецсен çавăрса илнĕ дивизийĕсен юлашкийĕсене пĕтерсе пынă. Касторное хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра Н-ски соединенин боецĕсем тăшманăн çавăрса илнĕ групписенчен пĕрне аркатса тăкнă. Тăшманăн нумай салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 1.750 çынна тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн артиллери тăшманăн бронепоездне тата 2 паровозне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказ фрончĕнчи войскăсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра пирĕн танкистсемпе мотопехота тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та нимĕçсен колоннине аркатса тăкнă. Хăй тĕллĕн çӳрекен 3 орудие, боеприпассем тиенĕ 18 автомашинăна, 7 вездехода тата 25 мотоцикла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра гвардеец-кавалеристсем çĕрле атака туса нимĕç пехотине пĕр рота таран касса вакланă, халăх пурăнакан темиçе пункта ирĕке кăларнă. Боеприпассен пысăк склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Кавказ лешьенчи фронтăн войскисем, Белореченская ятлă район центрне илсе, çар пурлăхĕ тиенĕ 150 вагона тата боеприпассемпе çар хатĕрĕсен склачĕсене тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем халăх пурăнакан пĕр пысăк пункт патĕнче шоссе çулĕ çине тухнă та нимĕçсен каялла чакмалли çулне пӳлсе лартнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, 200 автомашина ытла, 190 миномет, 20 пулемет, хăваласа каякан пысăк кĕтĕве тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тăшманăн 180 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Курск облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ сасартăк нимĕç гарнизонне тапăннă. Совет патриочĕсем тăшманăн 100 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ. Çапса çĕмĕрнĕ гарнизонăн юлашкийĕсем тарса саланнă. Партизансем 10 пулемет, 64 винтовка тата патронсем нумай тытса илнĕ.

Краснодар крайĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсемпе çапăçса, 90 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Украинăн вăхăтлăха тытса илнĕ хулисемпе ялĕсенче çĕре юнпа шăвараççĕ. Декабрь вĕçĕнче Сумы облаçĕнчи Глухов хулинче тата унăн таврашĕнчи ялсенче нимĕçсем мирлĕ çынсене йышлăн арестленĕ. Гестапо тĕрмисене 1.000 çынна яхăн пăрахнă. Гитлерла палачсем арестленĕ çынсене ытла та тискеррĕн асаплантарнă. Вĕсен аллисене хыçалалла хуçлатнă, хуçнă, çӳçĕсене çунтарнă, ӳчĕсене хĕртнĕ тимĕрпе пĕçерттернĕ. Темиçе кун хушши асаплантарнă тата мăшкăлланă хыççăн фашистла ирсĕрсем çав çынсене хула хыçне илсе тухнă та персе вĕлернĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне парнесем ытларах ярса парар!

КАЛИНИНО, январĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ войскăсене панă приказ—Тăван çĕршывăн приказĕ пулса тăрать. Районри колхозсенче çак приказа ĕçсыннисене тимлĕн ăнлантарса параççĕ. Мăчамăшри «Первомайск» колхозра Сталин юлташăн приказне коммунист В. Зайцев юлташ ăнлантарса панĕ.

Сталин юлташăн чĕнĕвне колхозниксемпе колхозницăсем мухтавлă воинсем патне уяв парнисем ярса парас ĕçе активлăн хутшăннипе ответлерĕç. Вĕсем парнесем яма 50 килограмм какай, 75 килограмм тулă çăнăхĕ, 6 пăт пăрçа, 10 чăх, 25 килограмм сухан, 40 килограмм махорка, 4 литр эрех хатĕрлерĕç. «Броневик» колхоз членĕсем те боецсене 12 килограмм пыл, 3 пăт сысна какайĕ, 25 килограмм махорка, 75 килограмм тулă çăнăхĕ, 3 пăт пăрçа тата 10 уйрăм посылка ярса параççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕ М. Лаврентьев юлташ приказа сӳтсе-явма пуханнă митингра çапла каларĕ:

— Хĕрлĕ Çар боецĕсем чаплă çĕнтерӳ туни совет халăхĕ ирсĕр тăшмана çĕнтерес куна çывăхартать. Фронтри савăнăçлă хыпарсем мана çеç мар, пĕтĕм совет халăхне хумхантараççĕ.

М. Лаврентьев юлташ мухтавлă совет воинĕсем патне уяв ячĕпе пĕр посылка ярать, унта вăл пĕр литр эрех, тулă çăнăхĕнчен çу çинче пĕçернĕ сухари тата ытти япаласем те хурса ярать. Çавăн пекех «Трактор» колхозăн 70 çулхи членĕ Яков Васильев, иртнĕ çул колхозра 400 ĕçкунĕ ытла тунăскер, фронтовиксем патне парнесем ярас çĕре хутшăннисĕр пуçне, Хĕрлĕ Çар фондне 80 килограмм тырă хывать.

В. Шорников.

СТЕПАН ВОЛКОВ КАЛАСА ХĂВАРНИ

Аçтан вăл?
Кам?..
Çырман хаçат:
Пур ят,
пур хушамат.
Хăш халăхăн ачи?
Пĕлместпĕр.
Пĕр мар-и çак?
Вăл пулнă чикĕ хуралçи,
А вăрçă тапрансан — салтак:
Вăл çапăçнă.
Вăл чăмнă вут ăшне.
Тăшман пăван пек явăçнă,
Хăйранă йăс шăлне.
Шăл çине шăл!
Степанăн та мăка пулман.
Самант
вăл хушнă: «Тимĕр шăпăр,
шăл!»
Хыт шăлнă автомат.
Пĕрре, пулас атака умĕн,
Тем ларнă Волков кăшт
салхуллăн,
Тем çырнă вăл блок-нот çине.
Вăл татнă та ун листине
Пытарнă медальон ăшне.
Хускалнă батальон.
Васканă малалла.
Приказ: «Яла
йышăнмалла.
Парăннине —
плена илес,
Хирĕççине —
кĕрслеттерес!»
Юлташсемпе
малти ретре Степан.
Шартлаттарать аслати пек,
Сапать,
сапать тăхлан.
Çĕр макăрать.
Лерен те тимĕр çутарать:
Дзотра ларать иккен арлан.
Шартлаттарать пулеметран.
Аха!
Апла çакна çисе пăхха!
Степан вырттать.
Вăл хăвăрт-хăвăрт малалла
шăвать,
Кăшт çĕкленет,
Çине çинех гранат перет.
Дзот — сасăсăр.
Выртаççĕ нимĕçсем урасăр,
алăсăр.
Сыхлан,
Степан:
Тайкаланса тухать штабист.
Степан тĕллет,
тĕллет фашист:
Ик автомат кĕрлет...
Пĕтет тăшман.
Кусне хупать Степан.
Яла тасатрĕ батальон:
Туссем çĕклес тусне.
Çумра ун медальон:
Вăл çырнă пĕчĕк хут çине:
«Юлташăмсем!
Тен чĕрĕ тухмăп çак çапăçуран,
Тен ӳтĕм урлă каçĕç калтасем...
Çапах та калăр:
«Волков парăнман,
Вăл курайман çак çич юта.»
Тата
Мана хисеплĕр коммунист тесе.
Сыв пултăр халăх,
Сталин сывă пултăр!
Аркантарса та кисретсе
Хĕвеланăçнелле çул тытăр.
Салам Таръеçĕме,
Пепкеçĕм Таня хĕрĕме.»
Ăна пытарнă ял хыçне,
Пĕр çӳллĕ ту çине.
Ан тив, çав пĕчĕкçĕ тăпра
Аса илтертĕр паттăра.
Пуçне тайма пыни калатăр:
«Çывăр, харсăр.
Никам та çĕнес çук сан халăхна,
Ахаль вăл çуратман сана».

СТИХВАН ШАВЛЫ.

„Марс" колхоз çуракине хатĕрленсе çитрĕ

ЕЛЧĔК. (Хамăр корр.). ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕ йышăннă постановление тĕп вырăна хурса, Сăрьелĕнчи «Марс» колхоз председателĕ коммунист А. Гаязов юлташ 1943 çулта Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерӳллĕ çапăçăвне тивĕçлĕ тырпул туса илессишĕн пĕтĕм колхозниксене ĕçе мобилизацилерĕ. Ялти коммунистсемпе комсомолецсем тата колхоз активĕ колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăллă-ăнлантарулла ĕçе тĕрĕс тата куллен туса пынине пула, колхозăн кашни членĕ умра тăракан задачăсене лайăх ăнланнă. Колхозниксем 1943 çулта тухăçлă тырпул туса илессишĕн социализмлă ăмăртăва пĕр çын пек активлăн хутшăнчĕç, çуракине хатĕрленес ĕçре куллен хастарлăн ĕçлеме тытанчĕç.

Колхоз çуракине хатĕрленес ĕçе вăрлăхсем хатĕрлессинчен тытăнчĕ. Çуракинче акмалли вăрлăх тыррине çине тăрса хатĕрлерĕ. Акă халĕ çав тунă ĕçĕн результачĕсем кашни колхозникех савăнтараççĕ. Вăрлăхсем хатĕр тата вĕсем çителĕклĕ таранах пур. Пурĕ 937 центнер вăрлăх тасатса хатĕрленĕ, сортланă. Тулă вăрлăхĕн шăтас пахалăхĕ 96,5 процент, сĕлĕ вăрлăхĕн — 94 процент, кантăр вăрри — 91 процент. Ытти йышши тырăсен вăрлăхĕсем те кондицине лараççĕ.

Анчах колхозниксем вăрлăхсене тасатса сортланипе тата вĕсене кондицине лартнипех лăпланмаççĕ. Вăрлăхсене çураки çитиччен лайăх пăхса усрасси те пысăк ĕç. Çавăнпа та «Марс» колхозра вăрлăхлăх тырăсене кĕлетсене тирпейлĕн вырнаçтарса тухнă, вĕсем çине чăптасем витнĕ, юр пĕрчи те, çӳп-çап та ӳкмест вĕсем çине. Вĕсем çураки пуçланиччен шанчăклăн упранса выртаççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕç вăрлăхсене сортласа хатĕрленипех вĕçленмест. Пысăк тухăçлă тырпул туса илес пулсан, уйхире лайăх апатлантарса çемçетмелле. Çакна бригадирсем Кериме Хисамова, Фатыма Хасьянова тата ыттисем те кашни колхознике каласа ăнлантарнă. Çапла колхоз 450 гектар çинче щитсем лартса тата кĕлтесем лартса, юр нумай тытăнса юлмалли майсем тунă. Ку ĕç халĕ те пырать-ха. Колхозниксем кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата кĕл нумайрах пухса хатĕрлес ĕçе те пысăк хак параççĕ. Халĕ кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 40 центнер, кĕл 210 центнер пухса хатĕрленĕ. Уя тислĕк куллен 18 лашапа кăлараççĕ. Вĕсем кашни уйăхрах вăтам шутпа 540 лав тислĕк кăлараççĕ. Октябрь уйăхĕнчен пуçласа колхоз хăйĕн уйхирне 2011 лав тислĕк кăларнă.

Бригадăсем халĕ те, уйхирти ĕçсене тунă вăхăтри пекех, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Социализмлă ăмăртупа ĕçлесси кунта колхозниксен ĕç йăлинче тĕп вырăн йышăннă. Акă, пĕрремĕш бригада ăмăртура яланах малта пырать. Бригада 115 гектар çинче юр тытнă, 20 гектар çине тăкмалăх тислĕке уя кăларнă тата ытти те, Магинур Ахметова, Сугди Туктамишова тата ытти колхозницăсем те вăрлăх сортланă тата юр тытнă çĕрте ĕç нормине икшер çĕр процент ытла тултарса ĕçлеççĕ. Ĕçре Фатыма Хасьянова ертсе пыракан бригадăри колхозницăсем те кая юлмаççĕ. Вĕсем те 120 гектар çинче юр тытнă, 15 центнер кĕл пухнă.

Колхозăн ялхуçалăх машинисем те ĕçе хатĕр. Вĕсене юсас ĕçре тимĕрçĕ Гимранов юлташ куллен ырми-канми ĕçленĕ, 10 сеялкăпа 35 плуг паян тесен паянах ĕçе тухма хатĕр лараççĕ. Вĕсемпе ĕçлеме колхозниксене те уйăрса çирĕплетнĕ.

Транспорт инвентарĕсене тыткалас тата вĕсене пăхса усрас ĕçре колхоз çирĕп йĕрке тунă. Лаша кӳлмелли хăмăт-йĕнерчĕксем, пăявĕренсемпе ытти ĕç хатĕрĕсем уйрăм пӳртре упранаççĕ. Урапасем, ридвансем, туртасем уйрăм картишĕнче тăраççĕ. Вĕсемшĕн Г. Гайнутдинов колхозник ответлă. Колхозăн транспорт хуçалăхĕнче çирĕп йĕрке туса пыма ăна колхоз правленийĕ хушнă.

Транспорт инвентарĕпе усă курас ĕçре çирĕп йĕрке тунипе ĕнтĕ «Марс» колхозăн кашни лашана кӳлме хăмăт-пăяв пур, кашни лашана кӳлсе тухма урапа, çуна пур. Халь ĕçре çӳрекен хăмăт-пăявсемсĕр пуçне колхоз правленийĕ çуракинче ĕçлемелли хăмăт-пăявсене уйрăм туса хатĕрленĕ. Вĕсемпе халь усă курмаççĕ.

Нумаях пулмасть колхозниксене ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе ЧАССР Совнаркомĕ лашасем тата транспорт инвентарĕ çинчен йышăннă постановленипе паллаштарчĕç. Вăл постановленире палăртнă кăтартăва колхозниксем ырласа мухтарĕç. Колхозăн транспорт инвентарьне тата конюхсен ĕçне тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕç.

С. ШАДИН.

Фронтовиксене—илемлĕ литература кĕнекисем

СĔНТĔРВАРРИ. Шуршăлти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем фронтовиксем валли 105 кĕнеке пухрĕç. Ку ĕçре А. Колесников, В. Исаев, Г. Яковлев вĕренекенсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли хăйсен библиотекисенчен 6—7-шер кĕнеке пачĕç. Чăрăшкассинчи пуçламĕш шкулта вĕренекенсем те фронтовиксене ярса пама 100 кĕнеке ытла пухнă.

Е. Челеверов.

Ют çĕршывсенче

„Германин 6-мĕш армине пĕтерсе тăкнă пирки савăнма пирĕн уйрăм сăлтав пур"

БЕЛЬГИН ИНФОРМАЦИ МИНИСТЕРСТВИ КАЛАНИ

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Сталинград патĕнче Германин 6-мĕш армине пĕтерсе тăкнă май Бельгин информаци министерстви çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: «Улттăмĕш арми хăй тытса илме хăтланнă Сталинград патĕнче пĕтсе ларчĕ. Гитлер çав Сталинграда илетпĕрех тесе мухтанса каланăччĕ. Улттăмĕш арми! Бельгиецсен çав армие пĕтерсе тăкнипе савăнма хăйсен уйрăм сăлтав пур, мĕншĕн тесессĕн шăп çав армие 1940 çулхи майăн 10-мĕшĕнче Бельгие çĕмĕрсе кĕрсе кайма хушнă, çав арми вара улталаса тата вăйпа пирĕн войскăсене Альберт каналĕ патĕнче çĕнтерчĕ. Вăл пур çĕрте те юхăнупа вилĕм саракан тăвăл пек Бельги урлă çĕмĕрттерсе каçрĕ, унпа кĕрешсе пирĕн хастарлă салтаксен легионĕсем вилсе выртрĕç. Гитлер çав тери мухтаннă полксем, пĕлсе çитмелле мар пекскерсем, хăйсен хăвачĕпе ӳсĕрĕлсе кайнăскерсем, мăнкăмăллăскерсем, пирĕн тустарса-юхăнтарса пĕтернĕ хуласем тăрăх çĕнтерӳçĕсем пек чаплăн утса тухрĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕсем пирĕн чикĕсенчен пин миля аякра, вырăссен тăрăн юрĕ айĕнче выртаççĕ. Вĕсем мар Сталинграда çĕнтерсе илчĕç, Сталинград вĕсене тытса илчĕ. Вĕсен чуна ыраттаракан мăнкăмăлне нимĕн тума пултараймасăр курса тăнă çынсемшĕн вĕсен шăнса кайнă виллисем халь правосуди пулассине, вĕсене таврăсси пуçланнине кăтартса тăракан паллăсем пулса тăраççĕ, вĕсене туллин таврăма сăмах панине кăтартаççĕ».

ГИТЛЕРЛА ПИЧЕТ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ГЕРМАНИ ХУШШИНЧИ ФРОНТРИ ЛАРУ-ТĂРУ ПИРКИ ХЫТĂ ПĂШĂРХАНАТЬ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен фашистла пичечĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра гитлерла войскăсем поражени тӳснĕ пирки пăшăрханать. «Берлинер локальанцейгер» хаçат Хĕвелтухăçĕнче «калама çук йывăр çапăçусем» пынине палăртать. «Кашни нимĕçĕн, кашни нимĕç хĕрарăмĕн çакна ăнланмалла: лару-тăру питех те çивĕчленсе кайрĕ,—тет хаçат.—Çакă вăл лару-тăру питех те çивĕчленсе кайнине кăтартакан паллăсем пулса тăнине лайăхах ăнланса илеймен çынсене çакна уççăн та ăнланмалла каласа парас пулать: хальхи вăхăтра Хĕвелтухăçĕнче халиччен пулман пек йывăр çапăçусем пыраççĕ. Чи тăмсай çыннăн та «Хĕвелтухăçĕнче халиччен пулман пек йывăр çапăçусем пыраççĕ» тенĕ сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланса илмелле», тет.

«Гамбургер фремденблат» хаçат Германи халăхне «лару-тăру питĕ хăрушăланни» çинчен астутарать, çак хăрушлăх вăл «Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Германи войскисен чылай пысăк пайĕн наступлени тунă çĕртенех оборонăна куçмалла пулнă пирки сиксе тухнă», тет. «Фронт юлашки резервсемпе усă курма хушать, тыл та юлашки резервсемпе усă курма хушать»,—тет хаçат. «Берлинер локальанцейгер» хаçат та халăха «юлашки ӳт-пӳ вăйĕпе духовнăй вăя ĕçе яма» тăрăхса чĕнет.

Германи халăхĕ ыйăннине кăтартакан паллăсем тата вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем ӳссе пынă пирки гитлеровецсем питĕ пăшăрханаççĕ. «Национальцейтунг» хаçат нимĕç халăхне «ыйăннине ан палăртăр» тесе йăлăнать. «Нимĕç халăхĕ, тесе çырать хаçат, паллах ĕнтĕ, вăрçă часрах пĕттĕрччĕ тесе тăрать, анчах та вăл ыйăннине палăртни мĕне пĕлтернине питĕ лайăх пĕлсе тăрать». «Ангрифф» хаçат «вăрçă тата мĕн чухлĕ вăхăта пырĕ, вăл мĕн патне илсе çитерĕ? тесе час-часах ыйтакан нимĕçсене вăрçать. «Çавăн пек калаçнăшăн вĕсене ответ тытма хушсассăн,—тесе хуйхăрса çырать хаçат,—вĕсем çапла калаççĕ: ку вăл пирĕн шухăш мар, вăл халăх шухăшĕ, теççĕ».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Февралĕн 3-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Верховный Суд çуртĕнче предприятисен, учрежденисен тата организацисен главнăй (старши) бухгалтерĕсен канашлăвĕ пулать. Канашлу рабочисемпе служащисенчен налогсемпе сборсене тытса юлас ыйтупа пулса иртет.

Канашлăва обязательнăй йĕркепе пымалла.

Горфинотдел.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 622 Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 84 п.